АПРЕЛĔН 14-МĔШĔЧЧЕН ХАÇАТ-ЖУРНАЛА ПОЧТА УЙРĂМĔСЕНЧЕ ЙЎНĔРЕХ ХАКПА ÇЫРĂНТАРАÇÇĔ


# ПУРНĂÇ ÇУЛĔПЕ

1932 çулхи августăн 4-мĕшĕнче тухма пуçланă

ЭЛĔК РАЙОН ХАÇАЧĔ

№13(12080) 2022, ака/апрель, 08-мĕшĕ (эрнекун) Хакĕ ирĕклĕ

www.alikovopress.ru


ÇĔНĔ СПЕКТАКЛЬ

## Чăн пурнăçа камит выляса сăнларĕç



• «Тиркекене тирĕк тĕп» камите хутшăннă артистсем.

**Театр – вăл пирĕн пурнăç, кашниех унта хăйĕн сценарийĕпе вылять. Кулленех эпир хамăр пурнăçăн сцени çинче е камит лартатпăр, е трагедипе драма вылятпăр. Çакна апрелĕн 5-мĕшĕнче Элĕкри халăх театрĕн артисчĕсем те Николай Угарин çырнă «Тиркекене тирĕк тĕп» вицĕ пайлă музыкăлла камите сцена çине кăларă май çирĕплетсе пачĕç. Спектакльти тĕп сăнар Улька аслă пĕлӳ илнĕ Мишша ывăлне авалантарассишĕн хыпса çунать. Вăл хистенипех ĕнтĕ пĕве кĕнĕ яш кĕрĕм сăнран илемлĕ, ĕçлеме ӳркенмен, хăйне килĕштерекен Верукпа пĕрлешме кăмăл тăвать. Лăпланмалла пек те ватăн, çук çав, çĕнĕ çын ниепле те юраймасть иккĕмĕш амăшне. Кин пĕтĕм ĕçе хăй пурнăçлани килĕшмест ăна, унăн пурлăхне хапсăнса пур çĕрте те хуçа пулма тăрăшать иккен кин. Хунямăшĕн пусмăрне тӳсейменренех амăшĕ патне таврăнать Верук.**

Улькан вара кунщăн кулянмалла-и, ялта унăн Мишша ывăлне качча килес шутлă хĕр сахал-и? Икĕ эрнере вицĕ хутчен авлантарма ĕлкĕрет пăшатан пек хĕрарăм ывăлне. Виççĕмĕш кинĕ хăйне туй кунĕнчех çатма çинчи пăрса пек «сиктерме» пуçласан çеç Верукран лайăх, ĕçлеме ӳркенмен, ватăсене вырăна хуракан кин тупаяс çуккине ăнланса илет вăл. Артистсене пултарулăхне пăхса ларнă май куракан ялти чăн-чăн пурнăçа куç умне кăларчĕ, вĕсенче куллен хăйсем паллакан çынсен сăнарне те шырарĕ. Ку хутĕнче сцена çине артистсен пысăк йышех тухмарĕ пулин те куракансен кăмăлне пĕтĕмĕшпех тивĕçтерчĕç вĕсем. Çакна куракансем спектакль тăршшĕпех артистсене алă çупса хавхалантарни те, хырăм тытсах кулни те çирĕплетет.

Спектакль режиссерĕ Инна Афанасьева пĕлтернĕ тăрăх, декабрь уйăхĕнчех хатĕрленме пуçланă. Пĕлтĕр куракан умне драмăпа тухнăран, кăçал сцена çине камит кăларнă. Пĕр евĕрлĕ спектакль куракана йăлăхтарасран çапла майпа черетлентерсе пыраççĕ те. Спектакльти артистсенчен чылайăшĕ куракана тахçанах тыткăнлама ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Ку хутĕнче Улька сăнарне калăпланă Галина Краснова Элĕкри халăх театрĕнче 10-мĕш сăнарпа куракан умне тухнă. Сергей Ивановшăн Мишша сăнарĕ 12-мĕш пулнă пулсан, Виталий Филипповшăн Микулай сăнарĕ – çиччĕмĕш. Ирина Трифонова хула хĕрĕн Люба сăнарĕпе пиллĕкмĕш хут, Верук сăнарĕпе Людмила Андреева тăваттăмĕш хут куракан умне тухрĕç. Чăваш Республикин культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ хисеплĕ ята тивĕçнĕ Лидия Филипповăн кун-çулĕ халăх театрĕпех çыхăннă, режиссерта тăрăшнă.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

### САЛАМЛАТПĂР

«Чăваш Республикинчи агропромышленноç комплексĕн ветеранĕсен союзĕ» обществăлла организаци йĕркеленнĕренпе 10 çул çитнĕ май тата обществăлла ĕçре хастар пулнăшăн «Чăваш Республикинчи агропромышленноç комплексĕн ветеранĕсен союзĕ» Элĕк районĕнчи обществăлла организацин председательне **Николай Макарович СЕРГЕЕВА** тав тăватăп.

**С. АРТАМОНОВ,**
**Чăваш Республикин Ял хуçалăх министрĕ.**

ЭЛĔК ЕН ХЫПАРĔСЕМ

## Салтаксем валли парнесем пухрĕç



Чăваш Енри Хĕрарăмсен канашĕ Раççейри Хĕрарăмсен пĕрлешĕвĕ пуçарнипе Украинăри ятарлă операцисене хутшăнакансем валли парнесем пуçтарнă. Ку ыр кăмăллăх акцине Элĕксем те хăйсен тӳпине хывнă.

Апрелĕн 1-4-мĕшĕсенче Элĕк район администрацийĕн çуртĕнче йышăну пунктне йĕркеленĕ. Ыр кăмăллăх акцине районти 18 организацире пухнă таварсене пĕтĕмпе 200 пин тенкĕлĕх кӳрсе килнĕ. Кунта ытларах вĕренӳ учрежденийĕсем палăрнă. Çавăн пекех районти тĕп больница ĕçченĕсем 70 пин тенкĕрен ытларах укçа-тенкĕ пухса парнесем хатĕрленĕ. Волонтерсем таварсене тĕрĕсленĕ хыççăн Шупашкар хулине çитерсе панă.

«Пирĕнтен кашниех йывăр та хумханулла вăхăта чăтса ирттерме пулăшма пултарать», – тесе пĕлтерчĕ районти Хĕрарăмсен канашĕн председателĕ Василиса Архипова ыр кăмăллăх акцине хутшăнакансене тав туса.

## Удобрени хатĕрлеççĕ

С.Волков ертсе пыракан хресчен-фермер хуçалăхĕ çурхи уй-хир ĕçĕсене вăхăтра, лайăх пахалăхпа ирттерме тĕллев лартнă. Хальхи вăхăтра хĕрӳ тапхăра хатĕрленесси кал-кал пулса пырать. Пулăх тăварĕсемсĕр пысăк тухăç илеймĕн. Çавна тĕпе хурса КАС шĕвĕ комплекслă удобрени янтăлассипе тимлеççĕ. Ăна пурĕ 300 тонна хатĕрлеме палăртнă пулсан, ку таранччен 80 тонна кӳрсе килнĕ. Техника, тĕпрен илсен, юсавлă. Ăна тепĕр хут тишкерсе тухаççĕ, ĕçлеттерсе те пăхаççĕ.


**Акци!!!**
**Хаклă вулакансем!!!**

*Апрелĕн 4-14-мĕшĕсенче «Пурнăç çулĕпе» (индексĕ П4556) хаçата 2022 çулхи 2-мĕш çур çулта илсе тăма почта çыхăну уйрăмĕсенче йӳнĕрех хакпа – 459 тенкĕ те 06 пуспа çырăнтараççĕ.*


ÇАНТАЛĂК ÇИНЧЕН

| КУНСЕМ | 09.04 | 10.04 | 11.04 | 12.04 | 13.04 | 14.04 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Пĕлĕтлĕх. Атмосфера нӳрĕкĕ | | | | | | |
| Температура кăнтăрла | +13°С | +15°С | +16°С | +16°С | +15°С | +15°С |
| Температура каçхине | +3°С | +5°С | +8°С | +7°С | +5°С | +6°С |
| Атмосфера пусăмĕ | 742 | 743 | 745 | 748 | 746 | 740 |
| Нӳрĕклĕх | 84 | 84 | 73 | 65 | 60 | 66 |

«Метеоновости» ИА информацийĕ тăрăх.

НОМЕРТЕ ВУЛĂР


Çур акине валли техника та хатĕр, элита вăрлăх та туяннă Сурăмсем. 2

Ял çынни пĕр пулса çул та тăвасшăн, башня та юсасшăн. 3

Урпашри почта çыхăну уйрăмĕнче халĕ те кăмакана вутăпа хутаççĕ. 4

Кайăксем Чăваш Ене ултă тапхăрпа вĕçсе килеççĕ. 5

Ачи уйăхран çеç иртнине шута илмесĕрех эрех сыпнă амăшĕ. 6

Вĕренекенĕ Ф.Ванинăн таса ятне чылай çул иртсен таврăнă. 7

Шăплăхпа тулнă чечек шăршиллĕ каçсем юрату çуратаççĕ. 8

Салтак тӳми хырăмлăхри лăймакана та сиенлетме пултарать. 9